ХЫПАР

1999 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

1 (747) №, 2014, кăрлач (январь), 10-16

Хакĕ ирĕклĕ

12+

## ШУПАШКАРТИ ТĒП ПАСАРТИ ХАКСЕМ

/кăрлач уйăхĕн 9-мĕшĕ тĕлне/

| | |
|---|---|
| **ПАХЧА ÇИМĔÇ** | |
| *Килограмм* | *тенкĕ* |
| Çĕр улми | 20-25 |
| Купăста | 14 |
| Сухан | 20-25 |
| Кишĕр | 20-28 |
| Ыхра | 100-170 |
| Хăяр | 60-100 |
| Хĕрлĕ кăшман | 25 |
| Помидор | 40-110 |
| Пылак пăрăç | 100 |
| Тăварланă хăяр | 70 |
| Йӳçĕтнĕ купăста | 70 |
| Симĕс сухан | 75 |
| **УЛМА–ÇЫРЛА** | |
| Пан улми | 30-60 |
| Иçĕм çырли: хĕрли | 50-80 |
| хури | 60-80 |
| симĕсси | 50-80 |
| Апельсин | 50-55 |
| Лимон | 60-70 |
| Банан | 45 |
| Груша | 55-75 |
| Мандарин | 50-70 |
| Шур çырли | 130 |
| **ÇĂНĂХ–КĔРПЕ** | |
| Тулă çăнăхĕ | 20-25 |
| Вир кĕрпи | 17 |
| Хура тул –“– | 29 |
| Тулă –“– | 15-19 |
| Маннă –“– | 19-25 |
| Рис –“– | 35 |
| Пăрçа | 22 |
| * * * | |
| Сахăр песукĕ | 27 |
| Сахăр /катăкли/ | 42-48 |
| Пыл | 350 |
| **АШ-КАКАЙ** | |
| Ĕне ашĕ | 200-350 |
| Пăру ашĕ | 200-350 |
| Сысна ашĕ | 160-250 |
| Сурăх ашĕ | 200-350 |
| Пĕвер | 100-120 |
| Пӳре | 40 |
| Чăх ашĕ | 110-198 |
| Салă | 100-200 |
| * * * | |
| Çăмарта */теçетке/* | 36-58 |
| **ПУЛĂ** | |
| Шăнтнă скумбри | 100-150 |
| –“–“– сельдь | 85-90 |
| Мойва | 70 |
| Шăла пулă | 130-210 |
| Çăрттан | 130 |
| Тăварланă сельдь | 85-95 |
| **СĔТ–ТУРĂХ** | |
| Сĕт /литр/ | 35 |
| Хăйма | 90 |
| Тăпăрч | 150-170 |
| Сыр | 85-280 |
| Услам çу | 150-170 |



## Вулакансен ыйтăвĕсене хуравлатпăр

### ĔНЕ ХЫÇÇИ ÇИСЕ ЯНĀ

**Пирĕн ĕне çĕрле, эпир асăрхаман вăхăтра пăрулană. Эпир ирхине тухнă çĕре хыççине çисе яма ĕлкĕрнĕ. Хăшĕ-пĕри çакă ĕнен хырăмлăхне ĕçлеме йывăрлатать, çавăн пекех ĕне сĕт чакарать тесе калать. Çакă тĕрĕсех-и, ун пек чухне мĕн тумалла-ши?**

**Мария ИВАНОВА,**
Канаш районĕ.

Хисеплĕ Мария Ивановна! Пăшăрханма кирлĕ мар. Хыççи выльăх хырăмлăхĕнче хăех ирĕлсе пĕтет. Сайра-хутра кăна выльăх вар-хырăмĕ кăштах начартарах ĕçленĕ тĕслĕхсем пулкалаççĕ.

Хыççи çинĕ ĕне сĕтне чакармасть. Анчах унăн сĕчĕ малтанхи вăхăтра /1 уйăх пек/ йӳçек тутăллă пулать. Каярахпа вăл йĕркеленет.

### КĔРКУННЕ ТЕ,ÇУРКУННЕ ТЕ САПАÇÇĔ

**Манăн гербицид текен им-çам çинчен пĕлес килет. Ăна çĕр улми ани çине мĕнле хывмалла?**

**А.ЧЕРНОВ.**
Комсомольски районĕ,
Кивĕ Сĕнтĕр ялĕ.

Шурут, хурхух, кĕрен пиçен, йыт пырши – çĕр улми лаптăкĕн чи хăрушă тăшманĕсем. Сăтăрçăсемпе кĕрешме ятарлă им-çамсем – гербицидсем – пулăшаççĕ.

Вĕсемпе кĕркунне те /тымар çимĕç лартма уйăрнă лаптăк çинче/, çавăн пекех çуркунне те усă курма юрать. Çуркунне «торнадо» ятлă гербицидпа усă курма пултаратăр. Ăна çу уйăхĕн вĕçĕнче – çĕртме уйăхĕн пуçламăшĕнче сапаççĕ. Пĕр гектар çĕр валли 4-5 литр шĕвек кирлĕ. Пĕр сотка лаптăка 40-50 миллилитр /грамм/ çителĕклĕ.

Çум курăкпа кĕрешме ытти меслет те пулăшать. Сăмахран, пусă çаврăнăшĕпе усă курни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кĕркунне тăпрана лайăх сухаласа хăварсан та çум курăк тымарĕсем, вăррисем нумай пĕтеççĕ.

### ÇУЛПА ÇУЛ ПĔР МАР

**Пĕлтĕр хĕлĕн пĕрремĕш уйăхĕ ăшă та нӳрлĕ килчĕ. Çакнашкал çанталăк тата хăçан пулнă-ши? Ватăрах çынсем те кун пеккине ас тусах каймаççĕ.**

**А.ПАСТУХОВ.**
Муркаш районĕ.

Мĕнех тăвăн – этем ăс-тăнĕ, ас тăвăмĕ хăйне евĕрлĕ. Эпир иртнĕ çулсенче мĕн пулнине манăçа хăвармастпăр, çирĕм е вăтăр çул иртсен вара çакна аса илейместпĕр. Раштав /декабрь/ уйăхĕнче, сăмахран, 1936, 1948, 1960, 1963, 2006 çулсенче ăшă килнĕ. Çумăр çунă кунсем те пулнă тесе çирĕплетеççĕ. Хăш чухне аслати авăтса та тĕлĕнтерет. 1933, 1937, 1955, 1978, 2002 çулсенче хĕлĕн пĕрремĕш уйăхĕ питĕ сивĕ килнĕ. 1978 çулхи юлашки кун /раштавăн 31-мĕшĕ/ сывлăш температури 41,6 градус сивĕ пулнă!

### ÇĀМĀЛЛĀХ КАМĀН ПУР?

**Пĕлтĕр икĕ ачана усрава илтĕм. Иккĕшĕ те шкула çӳреççĕ. Эпĕ çул çитиччен тивĕçлĕ канăва тухма пултаратăп-и?**

**С.АКСЕНОВА.**
Канаш районĕ.

Шел те, сире аллă пилĕк çула çитиччен пенси шутласа пама май çук. Мĕншĕн тесен, пенси шутласа парасси тата тӳлесси пирки калакан саккунсемпе килĕшӳллĕн, пилĕк е ытларах ача çуратса воспитани парса ӳстернисем кăна çак правăпа усă курма пултараççĕ.

Çакна «Раççей Федерацийĕнчи ĕç пенсийĕсем çинчен» калакан саккунра палăртнă /28 статья/. Ачасене ӳстернипе пулакан тăкаксене саплаштарма сире пособи тӳлеме тивĕç. «Ачаллă çынсене патшалăх пособийĕсем парасси çинчен» саккунра ку виçене те çирĕплетнĕ. Калăпăр, 7 çула çитиччен çак пособи виçи 6041 тенкĕпе, 9 çулхишĕн вара 6634 тенкĕпе танлашать.

### САКĀР ÇУЛЛĀХ ПРОГРАММĀПА

**Çамрăк çемьесене патшалăх хваттер условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе пулăшу парать-и?**

**О.АЛЕКСЕЕВ.**
Етĕрне районĕ.

Ку ĕçе «Çамрăк çемьесене хваттер условийĕсене лайăхлатас тĕллевпе патшалăх енчен пулăшас тĕлĕшпе хушма мерăсем çинчен» указпа килĕшӳллĕн туса пыраççĕ. Кăçал çак йышăнăва пурнăçлама федераци бюджетĕнчен 180 миллион Чăваш Республикин бюджетĕнчен 270,89 миллион тенкĕ уйăрма палăртнă. Кунсăр пуçне вырăнти влаç органĕсем те укçа-тенкĕпе пулăшма тивĕç. Çамрăк çемьесене пулăшу парас тĕллевпе 7 çул /2008-2015 çулсем/ валли 9 миллиард тенкĕ хывма палăртнă.

## КĀРЛАЧ (ЯНВАРЬ) УЙĀХĒН ПАЛЛИСЕМ

Кăрлач çулталăкшăн – пуçламăш, хĕлшĕн – варри.

**Кăрлач - çулталăк хуçи, ун хыççăн ытти уйăхсем черетпе тăраççĕ.**

Кăрлач уйăхĕ кашни çулах сивĕ пулмасть, енчен те иртнĕ çул вăл ăшă пулнă тăк, тепĕр çул хаяртарах пулать.

**Кăрлачра тул хăвăрт çутăлсан – юр пуласса.**

Кăрлачра сасă инçене ян каять – сивĕ хаярланать.

**Вăрман шатăртатать – сивĕ нумай вăхăт тăрать.**

Йывăççене çемçе шурă пас тытать – тепĕр кун уяр çанталăк пулать.

**Мăрьерен тухакан тĕтĕм çĕр çине анать – ăшăтасса, çӳлелле тӳп-тӳрĕ хăпарать – сивĕтессе.**

Хĕвел «хăлхисем» ӳсеççĕ – сивĕтессе.

**Хĕвел тӳп-тӳррĕн тухать - çилтăмана.**

Çĕрле Уйăх вăйлă çутатать е вăл çук тăк тӳпере çăлтăр нумай – тепĕр кун уяр, сивĕ çанталăк пулать.

**Уйăх шап-шуррăн курăнать - сивĕтессе.**

Уйăх çумĕнче юпасем курăнаççĕ – сивĕтессе.

**Çĕн Уйăх хăяккăн çуралать – ăшша, тӳррĕн тăк – сивве.**

Çăлтăрсем ытти чухнехинчен пĕчĕкрех курăнаççĕ – юр çăвасса.

## ХĒЛЛЕХИ САД ХӲТЛĒХ КĒТЕТ

***● Йывăç-тĕмĕн тымарĕсемпе вуллисем сивве пĕрешкел тӳсеймеççĕ: туратсем35-40 градус сивве тӳсме пултараççĕ тĕк, тымарсем вара 10 градуса яхăн сивве кăна тӳсейреççĕ, 12 градус сивĕре вĕсем пĕтме те пултараççĕ. Унсăр пуçне йывăççен çĕр çинчи пайĕ /вуллисемпе турачĕсем/ тымарсенчен хăвăртрах чĕрĕлеççĕ. Çавăнпа та сивĕрен чи малтанах тымарсене хӳтĕлеме тăрăшмалла.***

***● Ăшăтса янă тапхăрта юр мĕн чухлĕ тасарах – çавăн чухлĕ лайăхрах упранать. Çавăнпа та ун çине торф е кĕл ăна хăвăртрах ирĕлтермелле чухне кăна сапăр. Çĕр лайăх хупласа ăшă тыттăр тесен юра вараланма ан парăр.***

***● Нумай çул ӳсекен курăксен лаптăкĕсенче юр сийĕ çиелтен ирĕлсе пăрлансан, сывлăш лекейменнипе курăксем çĕрме пултараççĕ. Çавăнпа та ун пек вырăнсенче пăрланнă сие çĕмĕрсе тĕпретмелле.***

1 /747/ №, 2014,
кăрлач, 10-16



## 2014 ÇУЛТА ПАХЧА ÇИМĔÇ КУЛЬТУРИСЕНЕ АКМА-ЛАРТМА ĂНĂÇЛĂ КУНСЕН УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| | Кăрлач /январь/ | Нарăс /февраль/ | Пуш /март/ | Ака /апрель/ | Çу /май/ | Çĕртме /июнь/ | Утă /июль/ | Çурла /август/ | Авăн /сентябрь/ | Юпа /октябрь/ |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Çĕр улми | 4-6, 21-24, 28-30 | 10-12, 17-20, 24-26 | 17-19, 23-26, 28-29 | 13-14, 20-22, 24-26 | 10-13, 17-19, 26-27 | 7-9, 14-15, 22-24 | 7-9, 11 | 11-13, 30-31 | – | – |
| Купăста | 9-11, 14-15 | 1-3, 5-7 | 4-7, 9-12 | 1-3, 6-8 | 10-13, 26-27 | 7-9, 22-24 | 7-9, 11, 31 | 3-5, 11-13 | – | – |
| Сухан | 9-11, 24-26 | 10-12, 20-22 | 19-21, 28-29 | 16-18, 24-26 | 17-19, 21-23 | 14-15, 22-24 | 7-9, 11 | 11-13, 20-23 | 12-14, 16-19 | 9-11, 14-16 |
| Хăвăл сухан, шăлсăр сухан, ыхрути | 14-15, 24-26 | 1-3, 20-22 | 2-3, 19-21 | 6-8, 13-14 | 3-5, 10-13 | 1-2, 9-11 | 4-9, 24-26 | 3-5, 30-31 | 1, 25-29 | 5-7, 25-26 |
| Кишĕр, петрушка, пастернак | 21-24, 28-30 | 17-22, 24-26 | 17-21, 23-26 | 16-18, 20-22 | 17-19, 26-27 | 14-15, 17-20 | 15-17, 24-26 | 15-18, 20-23 | 12-14, 16-19 | 14-16, 21-23 |
| Хăяр | 4-6, 14-16 | 1-3, 10-12 | 2-3, 9-12 | 6-8, 24-26 | 3-5, 30-31 | 1-2, 9-11 | 7-9, 31 | 1-5, 28-31 | 1, 8, 26-29 | 1-3, 25-26 |
| Пăрăç | 4-6, 14-15, 24-26 | 1-3, 5-7, 10-12 | 4-7, 9-12, 28-29 | 1-3, 6-8, 13-14 | 10-13, 26-27, 30-31 | 7-11, 28-29 | 4-9, 24-26 | 3-5, 7-9 | 4-6, 25-29 | 5-7, 25-27 |
| Помидор, физалис | 9-11, 14-15, 28-30 | 5-7, 10-12, 20-22 | 2-4, 23-26 | 6-8, 13-14, 24-26 | 3-5, 30-31 | 1-2, 9-11 | 7-9, 11 | 10-12, 13-14 | 1-2, 6-8 | 7-11, 16-19 |
| Редис | 21-26, 28-30 | 17-22, 24-26 | 17-21, 28-29 | 16-18, 24-26 | 17-19, 26-27 | – | 19-21, 24-26 | 11-13, 20-23 | 12-14, 16-19 | 4-9, 24-26 |
| Петрушка, салат | 4-6, 14-15 | 1-3, 10-12 | 4-7, 9-12 | 1-3, 6-8 | 3-5, 30-31 | 1-2, 9-11 | 7-9, 11, 31 | 3-5, 30-31 | 1, 26-29 | 1-3, 5-7 |
| Çарăк, йӳç кăшман, дайкон | – | – | 19-21, 28-29 | 16-18, 24-26 | 21-23, 26-27 | 14-15, 22-24 | 15-17, 19-21 | 11-13, 20-23 | 13-14, 16-18 | 9-10,12-15 |
| Кăшман | – | – | 17-19, 23-26 | 16-18, 20-22 | 17-19, 26-27 | 17-20, 22-24 | 15-17, 24-26 | 15-18, 20-23 | 12-14, 16-19 | 14-16, 21-23 |
| Ыхра | 14-15, 24-26 | 10-12, 20-22 | 9-12, 19-21 | 6-8, 16-18 | 3-5, 21-23 | 1-2, 28-29 | 7-9, 11 | 11-13, 30-3 | 16-19, 26-29 | 14-15, 25-26 |
| Сельдерей | 24-26, 28-30 | 17-20, 24-26 | 17-19, 28-29 | 16-18, 24-26 | 17-19, 26-27 | 14-15, 17-20 | 15-17, 24-26 | 15-18, 20-23 | 12-14, 16-19 | 14-16, 21-23 |
| Тутă кĕртмелли ешĕл çимĕçсем | 4-6, 24-26 | 10-12, 20-22 | 9-12, 28-29 | 13-14, 16-18 | 10-13, 21-23 | 7-11, 28-29 | 4-9, 24-26 | 3-5, 7-9 | 4-6, 25-29 | 5-7, 25-27 |
| Базилик | 14-15, 24-26 | 1-3, 20-22 | 2, 19-21 | 6-8, 16-18 | 3-5, 13 | 1-2, 9-11 | 4-9, 24-26 | 3-5, 30-31 | 1, 25-29 | 5-7, 25-26 |
| Баклажан | 4-6, 14-15 | 1-3, 10-12 | 2, 9-12 | 6-8, 13-14 | 3-5, 13 | 9-11, 28-29 | 7-9, 31 | 1-5, 28-31 | 1,8, 26-29 | 1-3, 25-26 |
| Кавăн, кабачок, патиссон | 9-11, 14-15 | 1-3, 20-22 | 4-7, 28-29 | 1-3, 6-8 | 3-5, 26-27 | 1-2, 22-24 | 7-9, 30-31 | 1-2, 28-31 | – | – |
| Арпус, дыня | 8-9, 14 | 1-3, 5-7 | 9-12, 23-26 | 1-3, 20-22 | 10-13, 26-27, 30-31 | 7-9, 28-29 | 4-49, 24-26 | – | – | – |
| Пăрçа, соя, фасоль | 9-11, 21-24, 28-30 | 10-12, 17-20 | 9-12, 17-19 | 6-8, 13-14 | 3-5, 10-13 | 7-11, 17-20 | 4-9, 24-26 | 3-5, 7-18 | 4-6, 25-29 | 5-7, 25-26 |

## Чечексем пулăшаççĕ

# КИЛТИ «ВАСКАВЛĂ ПУЛĂШУ»

Килте питĕ кирлĕ çак пулăшуçă-чечексем çинчен чылайăшĕ пĕлмест те пулĕ. Мĕнле чечексем-ха вĕсем?



Хлорофитум

**Хлорофитум.** Çут çанталăк кондиционерĕ, сывлăша бактерисенчен тасатать, кислородпа пуянлатать. Кил-çуртри энергетикăна вăйлатать – унăн лапсăркка «калпакĕсем» кирек епле тĕттĕм çĕрте те ӳсеççĕ, унти тĕттĕм вăйсене тасатса пуянлатаççĕ.

**Мирт.** Тус та, пулăшуçă та. Сывлăша фитонцидсемпе пуянлатать Вăл килте пур чухне сывлăшри микроорганизмсен виçи икĕ хут чакать,этемĕн сывлав çулĕсене сиплеме пулăшать. Мирт энергетики пурнăçшăн, юратушăн меллĕ, анчах та хирĕçӳсем час-часах пулакан çемьере мирт ăна темĕнле лайăх пăхсан та типсе ларать.



Мирт

**Лимон, гардени, пӳлĕмри жасмин.** Сывлăша уçăлтараççĕ, тасатаççĕ çеç мар, çынна энергетика тĕлĕшĕнчен пулăшаççĕ те, унăн иммунитетне çирĕплетеççĕ. Çавăнпа та çак ӳсен-тăрана çывăрмалли пӳлĕмре вырнаçтарсан аван.



Лимон

**Кофе йывăçĕ, алоэ, плющ.** Питĕ хăватлă насус шутланаççĕ, вĕсем чирлĕ çыннăн энергетикине турса илеççĕ. Çавăнпа та вĕсене çывăрмалли пӳлĕмре вырнаçтарсан аван. Вĕсем ытти чечексемпе, уйрăмах кактуспа, драценăпа килĕштерменнине те шута илмелле.



Кофе

**Пассифлора, лавр çулçи, гибискус** нерв чирĕсемпе: депрессипе, ыйхă килменнипе, мигреньпе лайăх кĕрешеççĕ. Вĕсене уйрăмах çутă вырăн кирлĕ .



Пассифлора

**Сĕт курăкĕ /молочай/.** Ăна вăрăма кайнă чирпе аптăракансен килĕнче ӳстерме сĕнеççĕ.Вăл организма чир-чĕре çĕнтерме пулăшать, кăмăл-туйăма лайăхлатать.



Сĕт курăкĕ

**Пепероми, традесканци –** шыçă чирĕсем пуласран упраççĕ. Уйрăмах шултра, тачка çулçăллă чечексен сорчĕсем аван шутланаççĕ.



Пепероми

**Фукси.** Çын вăй-хăватне , кăмăл-туйăмне, шанăçне çирĕплетет, çавăнпа та ăна ватă çынсене ӳстерме сĕнеççĕ.



Фукси

**Толстянка -** укçа йывăçĕ. Кил-çурта пурлăх кӳрет çеç мар, вăйсăр организма чир-чĕр вăхăтĕнче уйрăмах лайăх вăй парса тăрать.



Толстянка

**Герань -** çут çанталăк релаксанчĕ, пăнтăхнă, нӳрĕ кил-çурта тасатать, уçăлтарать.



Герань

**Пĕтнĕк /мята/ -** тимлĕхе ӳстерет, лăплантарать, компьютерпа нумай ĕçлекен çынсене çак ӳсен-тăранпа усă курма сĕнеççĕ.



Пĕтнĕк

**Хризантема –** «усал куçсенчен» упрама, хӳтĕлеме пултаракан ӳсен-тăран шутланать.



Хризантема

**Упа сарри /папоротник/ -** пӳлĕм озонаторĕ, сывлăша тасатать, уçăлтарать,усăллă япаласемпе пуянлатать.



Упа сарри

## Усăллă канаш

# МОХЕР ЯПАЛАСЕНЕ УПРАССИ

● *Лӳчĕркеннĕ çĕнĕ мохер япалана йĕркене кĕртмешкĕн нӳрĕ пӳлĕмре /ваннăйра, тĕслĕхрен/ çакни усăллă. Пăс пулăшнипе пур лӳчĕркенчĕк те тӳрленет.*

● *Мохер япаласене çекĕл çине çакса шкапра, "сывлакан" ятарлă хутаççенче упрамалла.*

● *Кĕве çиесрен мохер япаласене халăх меслечĕсемпе усă курса та /лаванда е армути, тĕслĕхрен/, лавккаран туяннă ятарлă хими препарачĕсемпе те хӳтĕлеме пулать. Чи кирли, мохер тумтире вăхăт-вăхăтпа уçăлтармалла.*

● *Нӳрелчĕ тĕк çăм /мохер/ япалана батарея çине те çакмалла мар, фенпа та типĕтмелле мар. Ăна çекĕл çине çакса пӳлĕмри температурăра типĕтмелле.*

● *Вараланнă вырăнсене нӳрĕ щеткăпа е губкăпа сăтăрса тасатмалла.*

● *Химчисткăра мохер япаласене типĕлле тасатаççĕ. Анчах та çак меслетпе те виçесĕр усă курма кирлĕ мар – япала пахалăхне çухатма пултарать.*

## Тĕпелте чух

# ПЕРЕКЕТЛĔ АПАТ-ÇИМĔÇ

**Çемçе яшка.** Кирек епле шӳрпене те /кубиксенчен те юрать/ сĕлĕ хăрпăкĕ /овсянка/, кишĕр, сухан, тутă курăкĕсемпе специсем хушса пĕçермелле. Çак нимĕр пек яшка уйрăмах сĕт аллергийĕпе аптăракансемшĕн усăллă.



**Пулă шӳрпи.** Çĕр улмине шултра çаврашкан турамалла, кăштах шыв, лавр çулçи, ыхра, пĕр кашăк олива çăвĕ хушмалла. Юлашкинчен банкăри лосось пулла сĕткенĕпех хушмалла. Шӳрпе çăра пулмалла.

**Чечеклĕ купăста икерчи.** Чечеклĕ купăстана вĕтĕ пуçĕсем /чие çырли пысăкăш/ çине пайламалла, тăварлă шывра 1 сехет лартмалла. Шывне тăкмалла, 2 çăмарта, 3 апат кашăкĕ майонез, тăвар, çĕçĕ вĕçĕ чухлĕ чуста кăпкалатмăшĕ /разрыхлителĕ/, çăнăх хушса çăра хăйма пек пуличчен пăтратмалла. Икерчĕсене тип çупа ăшаламалла.

## Чĕр чун ячĕсен словарĕ

*Вăрăм хăлхаллă çара çерçи* – длинноухая ночница /шăши евĕрлĕ вĕçекен чĕр чун/

*Вăрăм хӳреллĕ кăсăя* – длиннохвостая синица /çерçи йăхĕнчи симĕс-кăвак тĕслĕ вĕçен кайăк/

*Вăрăм хӳреллĕ тăмана* – длиннохвостая неясыть /каçхи çăткăн кайăк/

*Вăрăм хӳреллĕ тинĕс чарланĕ* – длиннохвостая морская чайка

*Вăрăм хӳреллĕ тыркас* – длиннохвостый суслик /кăшлакансен йăхĕнчи уй-хир чĕр чунĕ/

*Вăрман кăтки* – лесной муравей /çурхах çунатлисен йăхне кĕрекен пĕчĕк кăпшанкă/

*Вăрман леммингĕ* – лесной лемминг /çурçĕрте пурăнакан шăши йышши кăшлакан пĕчĕк чĕр чун/

*Вăрман мулкачĕ* – заяц-беляк /вăрăм хăлхаллă, кĕске хӳреллĕ сĕт çиекенсен йăхĕнчи чĕр чун/

*Вăрман пăсари* – черный хорек /сăсар йышши мамăк тирлĕ çăткăн чĕр чун/

# ВАТТИСЕМ КАЛАНĂ ТĂРĂХ

***Усал çын вилсен çанталăк пăсăлать.***

***Усалшăн кăмака çинче те вырăн çук.***

***Кашкăр катинче качака пурăнмасть.***

***Мăнни мăнăрах çыртать.***

***Хаяр йытă та хӳрипе йăпăлтатать.***

***Çӳлте çăхан, çĕрте çĕлен.***

***Ани аттен те, урпи улпутăн.***

***Пуç касакан пуççăр юлнă.***

***Çĕленпе калтан чĕлхи пĕр.***

# ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 10.01 | 0 | 0 |
| 11.01 | + 1 | 0 |
| 12.01 | – 4 | – 1 |
| 13.01 | – 6 | – 12 |
| 14.01 | – 12 | – 15 |
| 15.01 | – 16 | – 23 |
| 16.01 | – 14 | – 15 |

# КУН ТĂРШШĔ

| | | Уйăх кунĕ |
|---|---|---|
| 10.01 | 7.25 | 10 у.к. |
| 11.01 | 7.28 | 11 у.к. |
| 12.01 | 7.30 | 12 у.к. |
| 13.01 | 7.34 | 13 у.к. |
| 14.01 | 7.36 | 14 у.к. |
| 15.01 | 7.38 | 15 у.к. |
| 16.01 | 7.42 | 16 у.к. |

**Кун тăршшĕ 42 минут вăрăмланать.**

# ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА

кăрлач, 13-19

## 13 тунти кун

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 4.05 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «БРАК ПО ЗАВЕЩАНИЮ. ТАНЦЫ НА УГЛЯХ» 16+
23.25 «Две звезды» Новогодний выпуск
С 1.40 вещание на Москву и Московскую область осуществляется по кабельным и спутниковым сетям
2.20, 3.05 Х/ф «МЫ НЕ ЖЕНАТЫ» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Муза и генерал. Секретный роман Эйтингона» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ПЕТЛЯ ВРЕМЕНИ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 «Аншлаг. Старый Новый год» 12+
0.45 «Дежурный по стране» Михаил Жванецкий
1.45 1.50 Т/с «ВХОД В ЛАБИРИНТ»
3.15 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-18» 16+
4.10 Комната смеха

### ЧТВ

*На канале «Россия 1»*
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**11.30-11.50 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Вести-Чăваш ен**
**19.40-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.25 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «ШАМАН» 16+
1.30, 1.30 Х/ф «ОПЯТЬ НОВЫЙ!» 16+
3.25 Дикий мир 0+
4.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.14 Анонс передач**
**7.15 Паянхи кун**
**7.18 Салтак пăтти**
**7.31 Юрă çаврăмĕ**
**7.35 Çула тухсан**
**7.49-8.00 Мы – вместе**
* * *
**12.10 Вести-Чувашия**
**12.13 Жемчужина Поволжья**
**12.33 Е.Максимова юрлать**
**12.44-13.00 Чĕрĕ шыв**

## 14 ытлари кун

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.30, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «БРАК ПО ЗАВЕЩАНИЮ. ТАНЦЫ НА УГЛЯХ» 16+
23.40 Х/ф «ОТЕЛЬ «МЭРИГОЛД»: ЛУЧШИЙ ИЗ ЭКЗОТИЧЕСКИХ» 12+
1.55, 3.05 Х/ф «ВОЖДЬ КРАСНОКОЖИХ И ДРУГИЕ»

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Драма на Памире. Приказано покорить» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ПЕТЛЯ ВРЕМЕНИ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ЛЮБОВЬ НЕ КАРТОШКА» 12+
23.50 Т/ф «Становление империи» 12+
1.00 «Честный детектив» 16+
1.35 Т/с «ВХОД В ЛАБИРИНТ»
3.00 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-18» 16+
4.00 Комната смеха

### ЧТВ

*На канале «Россия 1»*
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**9.00 Утренний гость /на чувашском языке/**
**9.40-9.55 Завтра начинается сегодня или Души прекрасные порывы ..**
**11.30-11.50 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Вести-Чăваш ен**
**19.40-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ»16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.25 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «ШАМАН» 16+
1.30 Главная дорога 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**11.10 Вести-Чувашия**
**11.14 Анонс передач**
**11.15 Паянхи кун**
**11.18 Остров молодых**
**11.34 Юрă çаврăмĕ**
**11.38 Зимняя сказка**
**11.43-12.00 С нами бог**
* * *
**13.10 Вести-Чувашия**
**13.13-14.00 Микрофон умĕнче – театр. Кĕмĕл пушмак**

## 15 юн кун

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.30, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.25 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «БРАК ПО ЗАВЕЩАНИЮ. ТАНЦЫ НА УГЛЯХ» 16+
23.40 Х/ф «ЛЮДИ ИКС: НАЧАЛО. РОСОМАХА» 16+
1.40, 3.05 Х/ф «ВСЕ О ЕВЕ»

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Под властью мусора» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ПЕТЛЯ ВРЕМЕНИ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ЛЮБОВЬ НЕ КАРТОШКА» 12+
23.50 Т/ф «Золотой век Российской империи» 12+
1.05 Т/с «ВХОД В ЛАБИРИНТ»
2.40 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-18» 16+
3.35 Комната смеха

### ЧТВ

*На канале «Россия 1»*
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**11.30-11.50 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Вести-Чăваш ен**
**19.40-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

6.00 Уважаемые телезрители! В связи с профилактическими работами, вещание телеканала начнется в 10.0. Приносим извинения за причиненные неудобства
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 «Первая кровь» 16+
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.25 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «ШАМАН» 16+
1.30 Квартирный вопрос 0+
2.35 Дикий мир 0+
3.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.14 Анонс передач**
**7.15 Паянхи кун**
**7.18 Имею право**
**7.24 Юрă çаврăмĕ**
**7.28 Хамăр ял**
**7.36 Права потребителя**
**7.43-8.00 Ирхи концерт**
* * *
**12.10 Вести-Чувашия**
**12.13 Микрофон умĕнче — театр. Кĕмĕл пушмак**
**12.34 Диалоги о школе**
**12.44-13.00 Хĕл илемĕ. Концерт**

## 16 кĕçнерни кун

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.30, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 3.55 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «БРАК ПО ЗАВЕЩАНИЮ. ТАНЦЫ НА УГЛЯХ» 16+
23.40 Х/ф «ЛЮДИ ИКС: ПЕРВЫЙ КЛАСС» 16+
2.00, 3.05 Х/ф «АВТОБУСНАЯ ОСТАНОВКА» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Ангелы с моря» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ПЕТЛЯ ВРЕМЕНИ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ЛЮБОВЬ НЕ КАРТОШКА» 12+
22.50 Х/ф «СВАДЬБА» 12+
0.15 Т/ф «Последний император. Русский урок» 12+
1.30 Т/с «ВХОД В ЛАБИРИНТ»
2.55 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-18» 16+
3.50 Комната смеха

### ЧТВ

*На канале «Россия 1»*
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**9.00-9.55 Телеюрă**
**11.30-11.50 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Вести-Чăваш ен**
**19.40-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.35 Спасатели 16+
9.05 «Медицинские тайны» 16+
9.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.25 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «ШАМАН» 16+
1.30 «Дачный ответ» 0+
2.35 Дикий мир0+
3.05 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**6.10 Вести-Чувашия**
**6.15 Анонс передач**
**6.18 Юхма енĕм – Патăръел**
**6.23 Спорт площадки**
**6.30 Хĕллехи юмах**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**
* * *
**7.10 Вести-Чувашия**
**7.14 Паянхи кун**
**7.19 Юрă çаврăмĕ**
**7.23 Открытая студия**
**7.48-8.00 Зимняя сказка**
* * *
**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**
* * *
**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Шăнкăрав**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 17 эрне кун

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 5.25 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 4.35 «В наше время» 12+
17.00 «Жди меня»
18.45 «Человек и закон» 16+
19.50 «Поле чудес» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «БРАК ПО ЗАВЕЩАНИЮ. ТАНЦЫ НА УГЛЯХ» 16+
22.30 Новый год на Первом
0.40 Х/ф «ЛЮБОВЬ ВНЕ ПРАВИЛ» 16+
2.45 Х/ф «РЕКА НЕ ТЕЧЕТ ВСПЯТЬ» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
8.55 Мусульмане
9.10 «Людмила Зыкина. Бриллианты одиночества» 12+
10.05 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
14.15 Дневник Сочи 2014
15.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 «Смеяться разрешается»
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Х/ф «НОВЫЕ ПРИКЛЮЧЕНИЯ АЛАДДИНА»
23.05 «Живой звук»
1.15 Х/ф «ТОЛЬКО ТЫ» 12+
3.15 Т/с «ВХОД В ЛАБИРИНТ»

### ЧТВ

*На канале «Россия 1»*
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**9.10 Для вас, любимые. Концерт по заявкам**
**9.25-10.05 Виктор Петров . 30 лет на сцене. 3 часть**
**11.30-11.50 Вести-ПФО**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Вести-Чăваш ен**
**19.40-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.25 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
23.10 «Жизнь как песня: Стас Пьеха» 16+
0.30 Х/ф «ОШИБКА СЛЕДСТВИЯ» 16+
2.20 Дикий мир 0+
2.40 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Чăваш тĕнчи**
**6.35 Юра савраме**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**
* * *
**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.28 Из сводок МВД**
**7.38 Ĕмĕр сакки сарлака**
**7.48-8.00 У Лукоморья**
* * *
**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**
* * *
**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.25 Ăраскал**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 18 шăмат кун

### 1 КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 «Ералаш»
6.30 Х/ф «ЗЕМЛЯ С ВЫСОТЫ ПТИЧЬЕГО ПОЛЕТА»
7.35 «Играй, гармонь любимая!»
8.20 М/ф «София Прекрасная»
8.45 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 «Умницы и умники» 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 «Смак» 12+
10.55 К юбилею актера. «Василий Лановой. «Честь имею!» 12+
12.15 «Идеальный ремонт»
13.10 «Ледниковый период»
16.10 «Евгений Плющенко. Жизнь продолжается» 12+
17.15 «Угадай мелодию» 12+
18.15 «Кто хочет стать миллионером?»
19.15 «Минута славы. Дорога на Олимп!» 12+
21.00 «Время»
21.20 «Сегодня вечером» 16+
23.00 «Шерлок Холмс: Знак трех» 12+
0.45 Х/ф «ЕЛИЗАВЕТА» 16+
3.05 Х/ф «МОЛОЖЕ СЕБЯ И НЕ ПОЧУВСТВУЕШЬ» 12+
4.35 «В наше время» 12+
5.25 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1

4.40 Х/ф «ОХОТА НА ЛИС»
6.35 «Сельское утро»
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.20 «Военная программа»
8.50 «Планета собак»
9.25 Субботник
10.05 «Моя планета» представляет»: «Нижнесвирский заповедник», «Экстрим покаталонски»
11.20, 4.50 Вести. Дежурная часть
11.55 «Честный детектив» 16+
12.25 Х/ф «ВСЕ НЕ СЛУЧАЙНО» 12+
14.30 Субботний вечер
16.40 Шоу «Десять миллионов»
17.45 «Кривое зеркало. Театр Евгения Петросяна» 16+
20.00 Вести в субботу
20.45 Х/ф «НЕ УХОДИ» 12+
0.40 Х/ф «ПТИЦА СЧАСТЬЯ» 12+
2.35 Горячая десятка 12+
3.45 Комната смеха

### ЧТВ

*На канале «Россия 1»*
**8.10-8.20 Вести-Чăваш ен**
**10.05 Для вас, любимые. Концерт по заявкам**
**10.50-11.00 Солнечный зайчик /на чувашском языке/**
**14.20-14.30 Вести-Чувашия**

### НТВ

5.40, 2.20 Х/ф «АГЕНТ ОСОБОГО НАЗНАЧЕНИЯ» 16+
7.25 Смотр 0+
8.00, 10.00, 13.00 Сегодня
8.15 «Золотой ключ» 0+
8.45 Их нравы 0+
9.25 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
10.55 Кулинарный поединок 0+
12.00 Квартирный вопрос 0+
13.25 Х/ф «РЖАВЧИНА» 16+
17.15 Х/ф «ЛЕНИН. КРАСНЫЙ ИМПЕРАТОР» 12+
19.00 «Центральное телевидение» с Вадимом Такменевым
19.50 «Новые русские сенсации. Примадонна с младенцами. Полная версия» 16+
21.50 Ты не поверишь! 16+
22.45 «Жизнь как песня: Татьяна Буланова» 16+
23.50 Х/ф «ВОЗВРАЩЕНИЕ» 16+
1.45 Авиаторы 12+
4.10 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Анонс передач**
**7.25 Паянхи кун**
**7.31 Столичный курьер**
**7.42 С нами Бог**
**7.57-8.00 Юрă çаврăмĕ**
* * *
**12.10 Радуга**
**12.33 Килте пĕçерер-ха**
**12.39-13.00 Эсир юратнă юрă-кĕвĕ**
* * *
**18.10-19.00 Юрă пултăр парне. Тӳрĕ эфир**

## 19 вырсарни кун

### 1 КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.10 «Ералаш»
6.40 Х/ф «ЗЕМЛЯ С ВЫСОТЫ ПТИЧЬЕГО ПОЛЕТА»
7.45 «Служу отчизне!»
8.15 М/ф «София Прекрасная»
8.40 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 «Фазенда»
12.15 Россия от края до края. «Большой Кавказ» 12+
13.15 «Свадебный переполох» 12+
14.10 Х/ф «ПУТЕШЕСТВИЯ ГУЛЛИВЕРА» 12+
15.40 Х/ф «СЛУЧАЙНЫЕ ЗНАКОМЫЕ» 12+
17.35 «Анна Нетребко. «И тут выхожу я!»
18.40 «Кубок профессионалов»
21.00 Воскресное «Время»
22.00 «Повтори!» Пародийное шоу 16+
0.25 Х/ф «РЕЗНЯ» 16+
С 2.00 вещание осуществляется по кабельным и спутниковым сетям
1.55 Х/ф «ЖИЛЕЦ» 16+
3.45 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.25 Х/ф «ГОРОД НЕВЕСТ»
7.20 Вся Россия
7.30 Сам себе режиссер
8.20 «Смехопанорама»
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному» Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10 «Городок» Дайджест
11.45, 14.30 Т/с «ВОЕННАЯ РАЗВЕДКА. СЕВЕРНЫЙ ФРОНТ» 12+
16.15 «Смеяться разрешается»
18.00 Х/ф «ЛЮБОВЬ ПО РАСПИСАНИЮ» 12+
20.00 Вести недели
21.30 Х/ф «МЕЧТАТЬ НЕ ВРЕДНО» 12+
23.30 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
1.25 Х/ф «ПОМНИ» 16+
2.00 Вещание по кабельным сетям с 2.00
3.40 «Планета собак»
4.15 Комната смеха

### ЧТВ

*На канале «Россия 1»*
**10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели**

### НТВ

6.05, 2.05 Х/ф «АГЕНТ ОСОБОГО НАЗНАЧЕНИЯ» 16+
8.00, 10.00, 13.00 Сегодня
8.15 «Русское лото плюс» 0+
8.45 Их нравы 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
10.55 «Чудо техники» 12+
11.25 «Поедем, поедим!» 0+
12.00 «Дачный ответ» 0+
13.25 Х/ф «РЖАВЧИНА» 16+
17.15 Х/ф «ЛЕНИН. КРАСНЫЙ ИМПЕРАТОР» 12+
18.20 Чрезвычайное происшествие. Обзор за неделю
19.00 «Сегодня. Итоговая программа»
19.50 Х/ф «Я - АНГИНА!» 16+
23.35 «Жизнь как песня: Сергей Чумаков» 16+
0.40 «Школа злословия» Татьяна Горяева 16+
1.30 Авиаторы 12+
4.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**7.10 Анонс передач**
**7.17 Паянхи кун**
**7.21 Столичный курьер**
**7.34 Здоровье**
**7.44 Сан яту-вĕрентекен**
**7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ**
* * *
**8.00-9.00 Между Волгой и Уралом**
* * *
**12.10-13.00 Кайри-мала. Хит-парад**
* * *
**18.10 Ылтăн çӳпçерен**
**18.48-19.00 Приглашение к диалогу**

## Вак-тĕвек

### КИРЛĔ ПУЛĔ

● Апат çĕприпе кăткăсене пĕтермешкĕн усă курма пулать. Ăна нӳретсе çăра паста пек тумалла, кăштах варени е пыл хушмалла. Çак хутăша кăткăсен çулĕ çине хурса тухмалла.

●Куç кĕски çине лекнĕ çӳçе сирпĕтмелли лака одеколонпа сăтăрса çăмăллăнах тасатма пулать.

●Йывăр сĕтел-пукан уринчен юлнă палас çинчи йĕрсене пĕтерме кăткăс мар. Малтан унта пăр катăкĕсем хурса ирĕлме парăр. Типсен вăл вырăна пылесоспа турттарса илĕр – йĕр юлмасть.

●Атă-пушмак кремĕ хытса ларчĕ тĕк кăларса ывăтма ан васкăр. Банкăна пĕр-икĕ сехет вĕри шывра тытăр – крем «çĕнелет».

● Грелкăри вĕри шыв нумай вăхăт сивĕнесрен кăштах тăвар хушни пулăшать.

●Кивĕ капрон чăлхаран савăт-сапа çумалли мунчала тума пулать. Сивĕ шывра нӳретнĕ çак мунчалапа тĕкĕре, кантăк е хрусталь савăт-сапана тасатма пулать. Кăштах супăнь сĕрсен çак мунчала çуллă кирек епле савăт-сапана та аван тасатать.

● Лайăх питĕренекен банкăна /савăта/ пĕр сий роза, лили е урăх чечекĕн çеçкисен çулçисене хурăр, çиелтен вĕтĕ тăвар сапăр. Унтан каллех тепĕр сий – чечек, сий – тăвар, çапла майпа савăт туличчен. Унта 3-4 апат кашăкĕ спирт е шурă эрех хушăр. Каярахпа, пӳлĕме тутлă шăршăллă тăвас килсен, савăт хупăлчине темиçе минутлăха уçăр.

●Нумай вăхăт упранипе типнĕ аçтăрхан мăйăрне хуппи-мĕнĕпех 5-6 кун кăштах тăвар хушнă шывра тытăр. Çакă мăйăра "çĕнетме" пулăшать.

● Питĕ вăйлă вараланнă ал шăллине тасатма çакăн пек хутăш пулăшать. Пысăк таза 3 апат кашăкĕ кĕпе çумалли порошок, 3 апат кашăкĕ отбеливатель, 3 апат кашăкĕ апат соди, 3 апат кашăкĕ тип çу ярăр, питĕ вĕри шыв хушăр. Ал шăллине çĕр каçипе тытăр, ирхине çуса тасатăр.

## Пĕлсе туянăр

### ФАРФОР ТИРĔК



Паха фарфор çутă ярать. Çавăнпа та тирĕке çутă çине тытса пăхăр – ун çинче сирĕн тирĕк тытакан пӳрнесен ĕмĕлки курăнма тивĕç.

Чăн-чăн фарфор йывăç япалапа шаккасан илемлĕн янăрать. Тирĕк çинчи ӳкерчĕк, эреш тикĕс, çирĕп, паха тĕслĕ пулмалла. Тĕксĕм сăрăсем япалана çителĕксĕр пиçĕхтернине кăтартаççĕ. Ун пек тирĕк çирĕп пулманран хăйĕн пахалăхне хăвăрт çухатать.

Пур фарфор япала виçĕ сортлă пулать. Хатĕрлевçĕ-заводăн тавар паллине япалан тĕпĕ çинче тĕрлĕ сăрăпа лартаççĕ. Пĕрремĕш сорта хĕрлĕ тĕспе, иккĕмĕшне – кăвак, виççĕмĕшне симĕс тĕспе палăртаççĕ.

Енчен те вензеле ӳкерсе мар, савăт тĕпне пусăрăнтарса йĕр пек тунă тăк – сирĕн умра фарфор мар, фаянс япала. Вăл фарфортан юларах парать, вĕрие те ытлах тӳсĕмлĕ мар.

Факс,/8352/28-83-70.
реклама пĕлтерӳ
Тел:28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

САНАТОРИЙ "НАДЕЖДА"
УВАЖАЕМЫЕ ТРУЖЕНИКИ СЕЛА!
Санаторий «НАДЕЖДА» поздравляет Вас
С НОВЫМ ГОДОМ
и предлагает с 13 января 2014 г.
санаторно-курортные путевки – 10 дней:
«Эконом» – 13600 руб.; «Мать и дитя» – 32400 руб.;
«Стандарт» – 18000 руб.; «Пенсионер» – 16200 руб.
К ВАШИМ УСЛУГАМ:
●высококвалифицированный персонал, ●современное оборудование, ●уникальные методы лечения различных заболеваний, ●сауна 2 раза в неделю, ●ежедневно большой бассейн и бассейн с мин. водой.
Справки по телефону: 77-04-04, 77-12-70.
Спешите, количество мест ограничено!
ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ,ПРОКОНСУЛЬТИРУЙТЕСЬ СО СПЕЦИАЛИСТОМ
Лицензия ЛО-21-01-000816 от 14.02.2013 выдана Минздрав и соцразвития Чувашской Республики

ПРОДАЮ

1.Качественную фабричную МЕБЕЛЬ по доступным ценам: стенки от 7900р., прихожие от 3600р., шкафы от 3300р., комоды от 2300р., столы от 1000р., кровати от 4000р. Доставка, сборка. Скидки, рассрочка. Салон «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка Т.: 465544, 89538998224. Сайт: www.excomfort.ru.

4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. Т. 89875766562.

5.Блоки керамзитобетонные 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные от производителя – недорого, цемент. Доставка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

8.Гравмассу, песок, щебень, торф, кирп. бой, керамблок от производителя. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 89051990122.

10.Песок, гравий, щебень, керамблок, торф. Т. 8-919-671-61-46.

12.Профнастил, металлочерепицу, оцинковку рул., листовую, трубы профильные, водостоки, дымоходы. Доставка. Т. 44-44-33.

14.Станки для валяния валенок. Т.: 89278617589, 8-937-381-05-85.

15.Кирпич, брусчатку, кольца, ОПГС, песок, КБ. Т. 89613393363.

16.Сетку-рабицу от производ-ля – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, сетку сварную, столбы, скобы, проволоку, калитки. Без выходных. Доставка. Т.: 683045, 89379522211.

21.Керамблоки, гравмассу, песок. Т.: 8-903-345-63-07, 89176757528.

23.Сетку-рабицу от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, профнастил, гвозди, столбы, проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

26.Керамблоки 20х20х40, 12х20х40, 10х20х40, керамзит в мешках, цемент, кирпич, к/кольца. Доставка. Т. 89033468556.

31.Грабли, косилки, сажалки, копалки, окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

42.Керамблоки 12х20х40, 20х20х40, кольца колодезные - диам. 1,5 м; 1 м; 0,8 м; 0,7 м; 0,45 м. Доставка. Бурение. Т.: 89876664140, 89370100141.

45.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – 33 руб., 9х20х40, 12х20х40; кольца колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозём, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

52.Пластиковые ОКНА, железные ДВЕРИ. Замер. Доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 8-917-652-96-94, 8-927-667-95-88.

71.ПИЛОМАТЕРИАЛ любой, срубы в наличии и на заказ, дрова, горбыль. Т. 8-903-389-14-00.

73.ПЛИТЫ тротуарные 400х400х50 – 420 руб. /кв.м., 500х500х60 – 450 руб./кв.м. Зимой дешевле. Т. 89674702736.

78.Блоки керамзитобетонные от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

ПРОДАЮ

104.Срубы с комплектацией. Доставка. Т. 89379528467, Владимир.

110.ОКНА пластиковые, стальные ДВЕРИ. Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Т. 89278404225.

117.ОКНА ЧУВАШИИ – пластиковые окна, железные двери. Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

150.Дымоходные трубы из нерж. стали. Аргонная сварка, медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

181.Пластиковые ОКНА. Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

227.Пластиковые ОКНА, стальные ДВЕРИ. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. Т. 89875754704.

250.ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ. Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

281.ОКНА пластиковые, ДВЕРИ стальные. Заводское производство. Гарантия 5 лет. Рассрочка. Дёшево. Т. 89276689303.

789.Керамблоки, цемент, керамзит в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

842. СРУБЫ для бани. Т. 37-28-74.

851.Кирпич, кольца. Д-ка /манипулятор вездеход/. Т. 444407.

874.Блоки керамзитобетонные вибропрессованные, пропаренные. Дёшево. Т. 89373866629.

885.Отруби, зерно, к/корм, сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

907.Отвалы, щётки, погрузчики на трактора. Низкие цены. Всё новое. Тел.: 8-927-851-68-58, /8352/ 40-67-65.

908.Пшеницу, ячмень, овес. Т.: 89276666151, 89373731270.

910.Прицеп мотоблока – недорого. Доставка. Т. 89053444735.

911.Ячмень,пшеницу, рожь, кукурузу. Т. 8-917-669-26-53.

928.Шерсть овечью осеннюю, битую. Т. 48-83-57.

936.ВАЗ-2106 /1997 г. в., цвет белый, в хорошем состоянии/. Цена 35000 руб. Т. 8-937-373-93-70.

938.2-комн. кв. /49,3 кв., 2/2, кирп., балкон 5,6 кв./ + постройки, погреб, баня, летняя кухня, сарай; сад, 10 соток земли – всё в собственности; полчаса езды от Новочебоксарска или меняю на 1-комн. кв-ру в Чебоксарах, Новочебоксарске или гостинку с вашей доплатой. Т.: 89279913981, 789491.

СУТАТĂП

795.Лайăх кĕрекен таптарнă çăм. Т. 8-917-066-41-46.

929.Хăмăр тĕслĕ чуптарнă пăру /мартра пăруламалла/ – Вăрнар районĕнче. Т. 89023270038.

939.Хăмăр тĕслĕ пăру – мартра пăруламалла. Т. 89022491133.

940.Пĕтĕ лаша тата тихине /1,7 уйăхра/ – Сĕнтĕрвăрри районĕнче. Т. 8-906-385-65-70.

941.Качака. Т. 89373980874.

КУПЛЮ

18.Бычков, тёлок, коров, лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

587.Коров, бычков и лошадей. Т. 89030659909.

843.Бычков, коров, тёлок, овец, свиноматок. Т. 8-927-999-37-37.

887.Закупаем КРС по высоким ценам. Т. 89061327604.

895.Дом, кв-ру. Т. 8-937-940-47-37.

РАБОТА

924.Для работы в новостроящемся микрорайоне Чебоксар требуются строители. Т. 29-99-70.

УСЛУГИ

13.Бурение колодцев, скважин; установка опор ЛЭП; к/кольца, бордюры, брусчатку. Д-ка. Т.: 89656858975, 89276689696.

22.Свадьбы, юбилеи – тамада, диджей, «Уяв». Т. 89373756378, Мила.

32.Лечение алкоголизма, табакокурения, анализы – с 8 до 19 ч., сб., воскр. с 8 до 13 ч. А.: Чеб., пр. Ленина, 56. Т. 552733. Лиц. ЛО 2101000408 МЗ СР РФ. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.

51.Бурение колодцев, скважин; кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 89278477143, 89373790080.

152.Бурение скважин на воду. Т. 8-960-302-12-93.

Учредитель:
"ХЫПАР" Издательство çурчĕ" АУ

« ХЫПАР »

КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

Çырăнмалли индекс: 54806

Директор – тĕп редактор
А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Редактор Т.В.ИЛЬИНА

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ:
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Кил-çурт, хушма хуçалăх".
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОН:
28-85-87, 56-00-67.
коммерци директорĕйĕ:
28-83-70,
56-20-07 – инспекторсем.

Факс: /8352/
28-83-70.
Электрон почти:
hypar@mail.ru
hypar2008@rambler.ru
hyparkd@mail.ru

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службинче /Роскомнадзор/ 26.04.2013 ç. ПИ ФС77-53799 №-пе регистрациленĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 16 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издетельство директорĕ.
Тираж 18838. Заказ 10.